Ответы на олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе для муниципального тура республиканской олимпиады школьников общеобразовательных организаций с изучением чувашского языка
2017-2018 учебный год. 7 класс

Максимальный балл – 50

1. *Куккук* – кукушка, *сар кайăк* – иволга, *кăсăя* – синица, *пилеш кайăкĕ* – дрозд (рябинник), *ула такка* – дятел, *текерлĕк* – чибис, *чарлан* – цапля, *тăрна* – журавль. *Колибри, попугай, баклан* т.ыт.те.

Текстра тупнă кашни ятшăн – 0,25-шер балл, тĕрĕс куçарнăшăн – 0,25-шер балл (пĕтĕмпе – 4 балл). Вырăсла та, чăвашла пĕр пек ятлă кайăк ячĕшĕн – 0,5-шер балл (пĕтĕмпе – 1 балл). Пурĕ пĕрле – 5 балл.

2. *Кăкăр* – грудь, *чĕре* – сердце.

Кашни сăмахшăн – 2,5-шер балл (тупнăшăн – 1 балл, вырăсла куçарнăшăн – 1,5 балл). Пĕтĕмпе – 5 балл.

3. *Таклаттар* – долбить, стучать. *Шыв шăнкăр-шăнкăр юхать. Ачасем чĕвĕл-чĕвĕл калаçаççĕ. Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать*.

Глаголшăн – 2 балл (тупнăшăн – 1 балл, вырăсла куçарнăшăн – 1 балл). Кашни предложенишĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

4. Чăвашла вĕренекен урăх халăх çыннисене сăмах тăвакан аффикс мĕнле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тунине пĕлни сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланма кирлĕ, мĕншĕн тесен чĕлхери пур сăмаха пĕлмесен те пултаратăн, анчах аффикс пĕлтерĕшне пĕлсен вăл е ку сăмах пĕлтерĕшне тавçăрса илме пулать. Текстра пĕр аффикс хушăнса пулнă сăмахсем: *хурăнлăх, чăрăшлăх, шурлăх*. Ку тĕслĕхсенче *-лăх* аффикс хушăннипе пулнă сăмахсем сăмах тĕпĕ кăтартакан япала (хурăн, чăрăш, шур) тулăх вырăнсене пĕлтереççĕ. *Юманлăх, çăкалăх, çĕмĕртлĕх* т.ыт.те.

Малтанхи ыйтăва хуравланăшăн – 1 балл, сăмахсене тупнăшăн – 0,5-шер балл, аффикс пĕлтерĕшне палăртнăшăн – 1 балл, тĕслĕхсемшĕн – 0,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

5. *Куç курать, хăлха илтет, ура утать. Манăн сылтăм ура ыратать. Санăн уру ыратмасть-и? Манăн аттепе анне ялта пурăнаççĕ. Санăн açупа аннӳ ăçта пурăнаççĕ?*

Кашни тĕрĕс куçарнă предложенишĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

6. *Мăклăх* – моховое болото.

***Мăклăх* сăмахшăн – 2 балл, вырăсла куçарнăшăн – 3 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. *Уй куçлă, вăрман хăлхаллă.*
Вăрман пек пуянни çук, уй пек асли çук.
Пĕри вăрмана, тепри армана.
Пысăк юман та пĕчек йĕкелтен ӳсет.
Вăрмана вутă турттармаççĕ, çăла шыв ямаççĕ.

Кашни ваттисен сăмахĕшĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

8. Сăмахран, *юман сĕтел, юман катка, юман урай, юман кăрăçĕ, юман çулçи т.ыт.те.*

Кашни тĕрĕс сăмах майлашăвĕшĕн – 1-ер балл (тупнăшăн – 0,5-шер балл, вырăсла куçарнăшăн – 0,5-шер балл). Пĕтĕмпе – 5 балл.

9. Атте.

Сăмахран, *Пирĕн атте – ват юман…*

Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

10. Тулли хуравшăн – 5 балл.